28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
НОЯБРЬ
13
ЫТЛАРИКУН
220 (6971) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕ,
ЧАССР Верховный Совечĕ
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

ЯЛТИ ÇАМРĂКСЕН КАÇХИ ШКУЛĔСЕН ĔÇНЕ ЛАЙĂХЛАТАР

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче ялсенчи чылай çамрăксене шкулсенче вĕренме йывăр пулнă. Чылай çамрăк ачасемпе хĕрсем, шкулта вĕренме пăрахса, фронта тухса кайнă ашшĕсемпе пиччĕшсем вырăнне колхозри ĕçе туса пынă. Ялхуçалăх производствинче паттăррăн, вăя шеллемесĕр ĕçлесе, çамрăксем фронта, хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара пысăк пулăшу парса тăнă. Апла пулин те малалла вĕренес ĕмĕте çамрăксем пиçхăçан та çухатман. Хĕрсе ĕçленĕ вăхăтрах нумай çамрăксем, кашни минут пушă вăхатпа усă курса, пĕрмаях вĕренсе пынă, хăйсен пĕлӳлĕхне ӳстернĕ.

1944 çулта правительство хресчен çамрăкĕсен каçхи шкулĕсене уçасси çинчен решени йышăнчĕ. Çĕршывра çĕнĕрен пиншер каçхи шкулсем уçăлчĕç, партипе правительство çамрăксене вĕренме кирлĕ условисем туса пачĕç.

Халĕ, вăрçă пирĕн çĕнтерӳпе вĕçленсе Тăван çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрне куçнă май, çамрăксене вĕренме лайăх условисем пулса тăраççĕ. Ялти çамрăксен шкулĕсем те çавăнпа пĕлтерхинчен лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлемелле.

Кăçалхи сентябрĕн 14-мĕшĕнче Чăваш республикин Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ялти çамрăксен каçхи шкулĕсене вĕренӳ çулне хатĕрлесси çинчен ятарласа постановлени йышăннă. Анчах та Сутĕç Халăх Комиссариачĕ, районсенчи сутĕç пайĕсем çак постановление пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ. ВЛКСМ Чăваш Обкомĕпе ВЛКСМ райкомĕсем те ку тĕлĕшпе сутĕç органĕсене кирлĕ пек пулăшса пымаççĕ, ялти çамрăксен каçхи шкулĕсен ĕçĕпе çителĕклĕ интересленмеççĕ.

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче ялти çамрăксен каçхи шкулĕсем вĕренӳ ĕçне тытăнмалла пулнă. Анчах та паянхи кун тĕлне вăл шкулсем ĕçлеме пуçлани çинчен республикăри 13 районтан çеç хыпарсем пур. Ытти 17 районта ку ĕç епле пыни çинчен нимĕн те паллă мар. Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, кăçалхи октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пур районсенче те каçхи шкулсенче мĕн чухлĕ çамрăк вĕренмеллине хисепе илмелле пулнă. Сутĕç комиссариачĕ çав ĕçе туман. Çавăнпа та республикăра паянхи кун тĕлне мĕн чухлĕ каçхи шкул ĕçленине, вăл шкулсенче мĕн чухлĕ çамрăк вĕреннине калаç пама пултараймаççĕ. Етĕрне, Сĕнтĕр, Куславкка, Елчĕк, Тăвай, Çĕрпӳ тата ытти хăшпĕр районсенчен каçхи шкулсем çинчен нимĕнле хыпар та çук. Уйрăмăнах ку ĕç çине Çĕрпӳ районĕнчи сутĕç пайĕ çăмăлттайăн пăхни тĕлĕнтерет. Çĕрпӳ районĕнче иртнĕ вĕренӳ çулĕнче те ялти çамрăксен каçхи шкулĕсем пачах пулман, кăçал та Çĕрпӳ районĕнче ку тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Районри сутĕç пайĕн заведующийĕ Альбатрос юлташ, каçхи шкулсенче вĕренме çамрăксем çук тесе, çав шкулсем çинчен пачах манса кайнă. Çĕрпӳ районĕнче каçхи шкулсенче вĕренмелли çамрăксем çук тенине кам ĕненме пултартăр-ха?

Красноармейски районра мĕн пурĕ те виçĕ каçхи шкул анчах уçнă. Октябрĕн 9-мĕшĕнче вăл районра каçхи шкулсен директорĕсемпе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлура çамрăксен каçхи шкулĕсене вĕренӳ çулне хатĕрлесси çинчен сӳтсе-явнă. Ĕçсынни депутачĕсен районри Совечĕн исполкомĕ пăхса тухса çирĕплетнĕ тăрăх, районра пурĕ виçĕ шкул çумĕнче каçхи шкулсен класĕсене: Красноармейски вăтам шкул çумĕнче икĕ класс, Упири вăтам шкул çумĕнче пĕр класс тата Янкас шкулĕ çумĕнче пĕр класс уçнă. Çав тăватă класра мĕн пурĕ—66 çамрăка вĕрентме палăртса хунă. Анчах Красноармейски районра каçхи шкулсенче вĕренме тивĕçлĕ çамрăксем 66 çын анчах-ши вара? Ку районра та каçхи шкулсенче вĕренме тивĕçлĕ çамрăксене шута илес ĕçе тĕплĕн туса иртермен, çамрăксене вăл шкулсене вĕренме хутшăнтарасси çинчен кирлĕ пек ăнлантарса паман.

Çамрăксен каçхи шкулĕсен ĕçне комсомол организацийĕсем пулăшасси çинчен уйрăмах каласа хăвармалла. 1945 çулхи август уйăхĕнче ВЛКСМ Центральный Комитечĕ ялти çамрăксен каçхи шкулĕсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес тĕлĕшпе комсомол организацийĕсен хутшăнма кирли çинчен ятарласа постановлени йышăннăччĕ. Çав постановленире кăтартса панă тăрăх, комсомол организацийĕсен, сутĕç пайĕсемпе пĕрле, кашни каçхи шкултах вĕренӳ ĕçне вăхăтра пуçлама кирлĕ ĕçсене пурне те туса çитермелле пулнă. Хăш ялта шкул, хăш ялта епле класс уçмаллине, кашни класра мĕн чухлĕ вĕренекен пулмаллине тĕплĕн палăртса хумалла пулнă. Комсомол организацийĕсен ялти çамрăксен пухăвĕсене пухса каçхи шкулсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла пулнă.

Анчах та ВЛКСМ райкомĕсем, пуçламĕш организацийĕсем çак пăха ĕç çине кирлĕ пек çаврăнса пăхман. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи Аслă Таяпара, Лаш Таяпара тата Аслă Елчĕкре каçхи шкулсем уçма палăртнă пулсан, ку таранччен пĕр шкул та ĕçлемест-ха. Çав районри Çĕнĕ Пăла ял Советĕнчен 37 çамрăк шкула çӳремелле тесе палăртса хунă, анчах шкул унта та ĕçлеме тытăнман. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Павлова юлташ «эпир нимĕн тума та пĕлместпĕр: ВЛКСМ Обкомĕнчен нимĕнле кăтарту та çук, программă та çук», тесе алăсене усса ларать.

Анчах та шкулсем уçăлнипе çеç лăпланса лармалла мар. Комсомол организацийĕсен шкул пурнăçĕпе, çамрăксен вĕренĕвĕпе куллен интересленсе пымалла. Кашни шкулăн пурнăçне пĕлсе тăмалла, кирлĕ вăхăтра пулăшу памалла, учительсемпе сыхăнса тăмалла. Иртнĕ çулта уйрăм çамрăксем вĕренӳ çулĕ варринче вĕренме пăрахнисем пулкаланă пулсан, кăçал ун пек тĕслĕхсем пачах та пулмалла мар.

Мирлĕ аталану тапхăрĕнче, çамрăксен умне коммунизм тăвас задача пĕтĕм анлăшĕпе тухса тăнă вăхăтра, халăх хуçалăхĕн пур пайĕсенче те пире лайăх вĕреннĕ культурăллă кадрсем нумай кирлĕ. Çавăнпа та ялти çамрăксене каçхи шкулсенче вĕрентесси—государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Çавăнпа та сутĕç органĕсен, комсомол организацийĕсен çамрăксен каçхи шкулĕсен ĕçне тивĕçлипе организацилемелле, шкулсен ĕçĕ йĕркеллĕ пулса пычăр тесе, мĕн кирлине пурне те туса пымалла. Краççын, вутă е ытти япаласем çукки çине ярса çамрăксен каçхи шкулĕсен ĕçне япăхтарни ниме юрăхсăр япала пулса тăрать.

Ялти çамрăксен каçхи шкулĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатар.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

ССР Союзĕн Техникăлла культурăсен Халăх Комиссариатне туса хурасси çинчен

1. ССР Союзĕн Техникăлла культурăсен союзлă-республикăллă Халăх Комиссариатне туса хурас. Ăна çĕрмамăкĕ, сахăр кăшманĕ, йĕтĕн, кантăр, табак, махорка, чей, цитрус культурисем, каучуклă ӳсен-тăрансем, эфирпа çу культурисем, соя тата новолубяной культурăсем пăхса ӳстерес ĕçе, çавăн пекех тата пурçăн хурчĕ ĕрчетес ĕçе ертсе пыма хушас.

2. Çак союзлă республикăсенче Техникăлла культурăсен Халăх Комиссариачĕсем туса хума йышăнас: РСФСР-та, Украина, Белорусс, Азербайджан, Грузин, Армян, Туркмен, Узбек, Таджик, Казах, Армян, Молдаван, Литва, Латви тата Эстони ССР-ĕсенче.

3. РСФСР-ăн Техникăлла культурăсен Халăх Комиссариатне СССР Совнаркомĕ çирĕплетнĕ список тăрăх предприятисемпе организацисем парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Н. А. Скворцов юлташа ССР Союзĕн Техникăлла культурăсен Халăх Комиссарĕ пулма лартасси çинчен

Николай Александрович **Скворцов** юлташа ССР Союзĕн Техникăлла культурăсен Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

СОВЕТ ÇАМРĂКĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ЮГОСЛАВИРЕН ТАВРĂННА

Совет çамрăкĕсен делегацийĕ Югославирен Мускава таврăннă. Çав делегаци Югослави федерацине кĕрекен облаçсене тата Белград, Загреб, Любляны, Сараево, Цетинье, Скопле тата ытти нумай хуласене те пырса курнă. Совет çамрăкĕсен делегацийĕ Югославире пулнă вăхăтра Югославипе Совет Союзĕнчи çамрăксен туслăхĕ лайăх палăрнă. Делегацие Югослави маршалĕ Иосип Броз Тито йышăннă. (ТАСС).

ДОБРУШРИ ХУТ ФАБРИКИ ĔÇЛЕМЕ ТЫТАННА

Белоруссири Добрушри «Герой труда» хут фабрикине вăрçăчен нумайĕшĕ пĕтернĕ. Ку фабрика талăкне 100 тонна хут тата 1.200.000 тетрадь туса кăларнă.

Халĕ ку фабрикăн пĕр пайĕ ĕçлеме тытăннă. Хут тăвакан тепĕр икĕ машинăпа пухса лартасси ĕçе ярăççĕ.

РСФСР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен РСФСР Суйлав комиссине çирĕплетесси çинчен

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 39-мĕш, 40-мĕш тата 41-мĕш статьисем тăрăх Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен РСФСР Суйлав комиссийĕн составне, çак обществăлла организацисемпе ĕçсыннисен обществисен представителĕсене кĕртсе, çирĕплетес:

Суйлав комиссийĕн председателĕ—Сергей Васильевич **Кафтанов**—Аслă шкулсемпе наука учрежденийĕсенче ĕçлекенсен профессиллĕ союзĕнчен.

Суйлав комиссийĕн председатель заместителĕ—Всеволод Николаевич **Иванов**—Пĕтĕм Союзри Ленинла Коммунистла Çамрăксен Союзĕнчен,

Суйлав комиссийĕн секретарĕ—Евгений Ермилович **Андреев**—Политикăпа сутĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсен профессиллĕ союзĕнчен.

Суйлав комиссийĕн членĕсем:

Василий Михайлович **Андрианов**—Свердловскри коммунистсен организацийĕнчен,

Екатерина Григорьевна **Барышникова**—Мускав хулинчи подшипниксем тăвакан пĕрремĕш заводри рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен,

Александр Николаевич **Догунков**—Сталинградри трактор заводĕнчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен.

Леонид Максимович **Леонов**—Совет писателĕсен союзĕнчен,

Антонина Филипповна **Маркова**—Ленинградри С. М. Киров ячĕпе тăракан Электросила заводĕнчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен,

Зиннят Ибетович **Муратов**—Тутар республикинчи коммунистсен организацийĕнчен,

Павел Павлович **Полубояров**—Ленин орденлĕ тата Хĕрлĕ Ялавлă 4-мĕш гвардейски Кантемировски танковăй дивизирен,

Фаина Гареевна **Султанова**—Пушкăрт республикинчи коммунистсен организацийĕнчен,

Михаил Демьянович **Чернявский**—Краснодар крайĕнчи Брюховецки районри Каганович ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен,

Ксения Прохоровна **Шмарева**—Омск облаçĕнчи Таврически районри Лобков ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ П. БАХМУРОВ.

Мускав. 1945 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕ.

Агитаторсен семинарĕ пулса иртрĕ

СĔНТĔР. Кунта район центрĕнчи учрежденисенче ĕçлекен агитаторсен семинарĕ пулса иртрĕ. Семинарта «Совет государствин суйлав системи» темăпа вăтам шкулта историпе Конституци вĕрентекен учитель П. Ф. Микешкин лекци вуласа пачĕ. Лекцие интересленсе итлерĕç. Агитаторсен занятийĕсем кашни эрнерех пĕр кун—эрнекун пулса иртмелле.

Е. АФАНАСЬЕВ.

Комсомолецсен политшкулĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Район центрĕнче икĕ уйăх хушши ĕнтĕ комсомолецсен политшкулĕ ĕçлет. Райцентрти комсомолецсем, кашни кĕçнерникун ĕç хыççăн парткабинета пухăнса, лекцисем итлеççĕ. Вĕсем эрнере 4 сехет хушши вĕренеççĕ.

Политшкулта ВКП(б) историне, Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçă çинчен» ятлă кĕнекине, ВКП(б) уставне вĕренеççĕ. Политшкула ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ М. Галкина юлташ ертсе пырать.

Комсомолецсем политшкула йĕркеллĕ çӳреççĕ, семинарсене лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Уйрăмах П. Харламов, А. Разумова, В. Пименова юлташсем тăрăшса вĕренеççĕ.

ВЛКСМ райкомĕ, политшкулта вĕренекенсене тĕрлĕрен порученисем парса, вĕсен теориллĕ пĕлĕвĕсене практикăпа çыхăнтарса ӳстерсе пыма тăрăшать. Халĕ политшкулта вĕренекенсем ĕçсыннисене суйлав законне ăнлантарас тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлеççĕ. Вĕсене агитаторсем пулса ĕçлеме районри учрежденисем çумне çирĕплетнĕ. Суйлав законне ăнлантарас тĕлĕшпе райфора М. Шипнжаева, Госбанкра П. Харламов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем служащисем хушшинче суйлав Положенийĕ тăрăх 3—4 калаçу ирттернĕ.

П. ТИХОНОВ.

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ĔÇ НОЯБРĔН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă панă
1. Вăрнар	108,5
2. Етĕрне	100,3
3. Сĕнтĕр	96.1
4. Чурачăк	96.0
5. Красноармейски	95.2
6. Муркаш	94.1
7. Шăхасан	93.2
8. Советски	93.2
9. Çĕрпӳ	92.3
10. Элĕк	92.2
11. Сĕнтĕрвăрри	91.0
12. Шупашкар	90.2
13. Калинино	89.6
14. Елчĕк	86.5
15. Пăрачкав	85.3
16. Октябрьски	84.1
17. Вăрмар	81.0
18. Канаш	79.6
19. Куславкка	79.1
20. Ишлей	78.8
21. Йĕпреç	78.7
22. Комсомольски	77.9
23. Улатăр	73.7
24. Первомайски	73.5
25. Чкаловски	72.6
26. Хĕрлĕ Чутай	71.9
27. Тăвай	66.6
28. Çĕмĕрле	65.6
29. Шăмăршă	59.9
30. Кувакино	46.6

ПЛАНРАН ИРТТЕРСЕ ТЫРĂ ПАРАÇÇĔ

ЕТĔРНЕ. Районри колхозсем государствăна тырă парса татрĕç. Халĕ вĕсем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене сывăх кунсенчех туса пĕтерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ: хĕрсех авăн çапаççĕ, Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă параççĕ. Паладайри Буденный ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă памалли плана пĕр уйăх каяллă тултарчĕ. Колхозниксене аванс шучĕпе кашни ĕçкунĕ пуçне 4-шар килограмм тырă, 6-шар килограмм çĕрулми валеçсе панă. Халĕ ку колхоз членĕсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ. Паянхи куна вĕсем 100 центнер тырă панă. Çавăн пекех «Мартăн 8-мĕшĕ» колхоз 70 центнер, «Париж Коммуни» колхоз 75 центнер, «Дружба», «Пионер» колхозсем 80-шар центнер тырă панă. «Пионер» колхоз натуроплата тыррине те аванс шучĕпе 210 центнер панă.

Н. ЦВЕТКОВ.

ГОСУДАРСТВО УМĔНЧЕ ПАРАМ ÇУК

Красноармейски районри «Чамыш» колхоз (председателĕ А. Павлов юлташ) государство умĕнчи хăйĕн обязательствине пĕтĕмпех парса татнă. Тырă памалли плана сентябрь уйăхĕнчех тултарнă, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 684 пăт тырă панă. Аш-какай 1946 çулшăн та парса татнă.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене пĕтĕмпех юсаса ăшă тытмалла тунă, выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ.

С. ВИКТОРИНОВ.

Гектартан 1.200 пăт çĕрулми

СОВЕТСКОЕ. Ишекассинчи «Комбайн» колхоз ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлет. Колхозниксем тырпул пухса кĕртес ĕçе кăтартуллăн туса пычĕç. Пур йышши культурăсене те пĕр тăкаксăр пухса кĕртрĕç.

Колхозра халĕ 3 молотилкăпа кăнтăрла та çĕрле те авăн çапаççĕ.

Государствăна 551 центнер тырă тата 244 центнер çĕрулми парса плана ытлашшипех тултарчĕ. Государствăна срокчен тырă парса татас тĕлĕшпе транспорт бригадин бригадирĕ Е. Матвеева юлташ пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕ. Вăл тырă леçме 29 хутчен кайнă. Çавăн пекех П. Александрова, Т. Абрамова юлташсем те унтан юлман.

Колхоз кĕрхи çĕртме планне тултарнă. Государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăм, çăмарта парса татнă. Фермăсенче выльăхсем планпа кăтартнинчен ытлашшипех пур. Фермăсене хĕле пур енчен те тĕплĕн хатĕрлесе çитернĕ.

Колхоз кăçал кашни гектартан 1.200 пăт çĕрулми туса илчĕ. Çĕрулмине вăрлăхлăх та, выльăх-чĕрлĕх валли те çителĕклĕ хывса хăварнă. Ун хыççăн колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 5-шер килограмм валеçсе панă.

Пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ П. Сорокин юлташ) политикăллă-массăллă ĕçе аван йĕркеленĕ. Колхозниксемпе час-часах докладсем, калаçусем ирттереççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ. Çавна пулах кунта ĕç дисциплини те çирĕп, колхозниксем пур ĕçе те вăхăтра тухаççĕ. Халĕ вĕсене СССР Верховный Советне суйламалли Положение вĕрентеççĕ. Ку тĕлĕшпе кашни 10 кил пуçне пĕр агитатор ĕçлет.

Я. СИГАЙ.

Вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ Чăваш республикинчи вăрман ĕçĕнчи мĕнпур работниксене, колхозниксемпе колхозницăсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар аслă Сталин ертсе пынипе Совет государствин чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварчĕ, хамăрăн çĕршыври халăхсемпе Европăри халăхсене фашистла чуралăхран çăлса хăварчĕ. Совет халăхĕ тылра çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшса ĕçленипе мухтавлă Хĕрлĕ Çара тăшмана аркатса такма мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăчĕ.

Вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсем Чăваш республикинчи мĕнпур ĕçсыннисемпе пĕрле вăрçă вăхăтĕнче Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçларĕç. Вĕсем чугун çул транспорчĕпе авиаци валли йывăç парса тăрас тĕлĕшпе государство панă заданисене ăнăçлăн тултарса пычĕç. 1942 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа, 1945 çулхи апрель уйăхне çитиччен республика чугун çул транспортне кăна 2.308 пин кубометр вутă ăратнă. Партипе правительсво вăрманта ĕçлекенсемпе колхозниксен ĕçне пысăка хурса хакларĕç. Чугун çул транспортне вутă тăратмалли плана ăнăçлăн тултарнăшăн пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕ икĕ хутчен куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава пачĕ.

Тăван çĕршыв умĕнче мирлĕ пурнăç тапхăрĕнче тăракан çĕнĕ задачăсене татса парас ĕçре вăрман промышленноçĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн çĕршыва вăрман продукцийĕ нумай кирлĕ.

Вăрман çĕршывăн халăх хуçалăхне çирĕплетме тата малалла аталантарса пыма каять. Йывăç нумай пулсан, пирĕн çĕркăмрăкĕ те, руда та, хут та, строительство материалĕсем те ытларах пулĕç, вара транспорт та лайăхрах ĕçлĕ, хуласемпе ялсенчи пурăнмалли çуртйĕрсем те йышлăланса пырĕç.

СССР Совнаркомĕ пирĕн республикăна 1945—46 çулсенче кĕркуннепе хĕллехи сезонра чугун çул транспорчĕ валли вутă тăратма, ту-сăрт промышленноçĕпе çĕркăмрăк промышленноçĕ валли вăрман тăратма, авиаци валли, фанерăсем тумалли тата ытти тĕрлĕ паха йывăç материалсем тăратма задани çирĕплетсе панă. Çав задание пирĕн кирек епле пулсан та тултармаллах!

Эпир Чăваш республикинчи вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен мĕнпур работниксене тата мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене СССР Верховный Совечĕн çитес суйлавĕсем ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçарса ярса çĕршыва ытларах вăрман хатĕрлесе пама чĕнетпĕр. Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа ВКП(б) Центральный Комитечĕ: «Вăрман промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Ытларах вăрман хатĕрлесе турттарса тухăр! Пирĕн çĕршывăн халăх хуçалăхне кирлĕ йывăç материалсене татти-сыппиисĕр парса тăрăр!»—тесе чĕнсе калани çине ответлесе, эпир çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. 1945—46 çулсенчи кĕркуннепе хĕллехи сезонра вăрман хатĕрлесе турттармалли плана СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне—1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне—75 процента çитиг. 1946 çулхи мартăн 10-мĕшĕ тĕлне—100 процента çити тултарма.
2. Ĕç тухăçлăхне вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе—5 процент, турттарса кăларас тĕлĕшпе—10 процент ӳстерме. Стахановецсен йышне ӳстерсе пырса, кашни рабочиех хăйĕн ĕç нормине тултарса пыракан тăвăпăр.
3. Механизациленĕ тата юри туса йĕркеленĕ çулсене пĕр чарăнмасăр ĕçлемелле тума, вăрман турттармалли çĕнĕ çулсем тума, тракторсене, автомашинăсене тата парфвозсене юсаса пĕтерме, вĕсемпе вăрман турттарнă çĕрте туллин усă курма, алăпа тата моторпа ĕçлекен электричество пăчкисемпе вăрман хатĕрлес ĕçре анлăн усă курма.
4. Вăрманта ĕçлекен рабочисене культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен чи лайăх условисем туса пама, техника хăрушсăрлăхĕпе ĕç сыхлăхĕ тĕлĕшпе тумалли ĕçсене тĕпренех лайăхлатма. Инкек-синкеке пула пĕр рабочи те стройран ан тухтăр.
5. Эпир Чăваш республикинчи вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен мĕнпур работниксене, колхозниксемпе колхозницăсене вăрман хатĕрлесе турттарса кăлармалли плана срокчен тултарассишĕн СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсен ячĕпе социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма чĕнетпĕр. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тунă çĕнтерӳсене ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе çирĕплетсе хурар. СССР Верховный Советне суйлама пурте пĕр çын пек кайса, совет халăхĕн политикăллă мораллĕ пĕрлĕхĕн вăй-хăватне тепĕр хут кăтартса парар.

Сывă пултăр аслă Совет Союзĕ—пирĕн Тăван çĕршыври халăхсен телейĕпе мухтавлăхĕн шанчăклă тĕрекĕ!

Сывă пултăр ССР Союзĕнчи халăхсен хăватлă союзĕ тата ĕмĕр арканми туслăхĕ!

Сывă пултăр Совет халăхĕн çулпуçĕ—аслă Сталин!

Вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсен канашлăвĕнче йышăннă.

Республикăри промартельсенче

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Чаканарти инвалидсен артелĕнче октябрь уйăхĕнче уйрăмах Раиса Бочкарова, Клавдия Адюкова, Анна Яковлева, Мария Васильева работницăсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем иртнĕ уйăхра сĕвĕ çĕлемелли плана кашниех 150—200 процент тултарчĕç. Артель плана 128 процент тултарчĕ.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. (Телефонпа). Хăтакассинчи «Лесоруб» промартель членĕсем октябрь уйăхĕнчи производство планне 227 процент тултарчĕç. Вăл шутран куллен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе плана 251.1 процент тултарнă.

Анаткасри «Вперед» промартель те октябрь уйăх планне мĕнпур продукци туса кăларас енĕпе 253.7 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе 408 процент тултарнă.

Ç ĕ р п и н т е н к ĕ

Ачаллă хĕрарăмсемпе ачасемшĕн тăрăшассине партипе правительство пысăк ĕçсенчен пĕри тесе шутлаççĕ.

Нумай ачаллă амăшĕсене пулăшу парасси çинчен Указ тухнăранпа Çĕмĕрле районĕнче пурĕ 107 ыйту пăхса тухнă. Вĕсене 10 уйăх хушшинче 100 пин тенкĕ укçа парса пулăшнă, нумайĕшĕ орденсемпе медальсем илнĕ.

Ан. ТАНЬКОВ.

Суту-илӳ предприятийĕсене премисем панă

ВЦСПС-па СССР Наркомторгĕ тата СССР-па РСФСР Центросоюзĕ, суту-илӳпе обществăллă апатлану енĕпе ĕçлекен организацисемпе предприятисен 1945 çулхи III-мĕш кварталти Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, çакăн пек премисем пама йышăннă:

Пĕрремĕш преми—Канаш районĕнчи Вăтапуç ялповĕн Карăклă лавкине (заведующийĕ Егоров); иккĕмĕш преми—Чăвашпотребсоюзĕн Канаш хулинчи шерпет шывĕсем тăвакан предприятине (директорĕ Мукин, местком председателĕ Баланова), Ишлей районĕнчи Ишлей ялповĕн Мамка лавкине (лавка заведующийĕ Ямутина), Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанаш ялповĕн Упакасси лавкине (лавка заведующийĕ Пахинов), Красноармейски районри Упи ялповĕн магазинне (магазин заведующийĕ Фомина), Вăрмар районĕнчи Пинер ялповĕн Çĕнĕ Кĕвчер лавкине (лавка заведующийĕ Герасимова); виççĕмĕш преми—Канаш районĕнчи Шаккăл ялпоне (ялпо председателĕ Васильев, местком председателĕ Дупевич), Вăрмар районĕнчи Пинер ялпоне (ялпо председателĕ Андреев, местком председателĕ Сорокина), Чăвашпотребсоюзĕн Канашри базине (база директорĕ Кулишов, местком председателĕ Максимова).

Çакăнпа пĕрлех СССР-па РСФСР Центросоюзĕн Президиумĕ Чăвашпотребсоюзĕн Улатăр хулинчи шерпет шывĕсем тăвакан предприятин директорне Мохова юлташа тав тунă.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ИНВАЛИЧĔСЕНЕ МЕДИЦИНА ЕНЧЕН ПУЛĂШНИ

Украинăра Отечественнăй вăрçă инвалидсене сыватмалли учрежденисем тăваççĕ. Облаçсен центрĕсемпе хуласенче 93 амбулаторипе клиника тăваççĕ. Кунсăр пуçне, наукăпа тĕпчев институчĕсен стационарĕсенче медицина енчен пысăк пулăшу памалли инвалидсем валли 625 койка уйăрса хураççĕ. Республикăри курорт управленийĕ санаторисенче инвалидсем валли 650 вырăн уйăрса хунă. Облаçсен госпиталĕсенче 27 поликлиника тăваççĕ.

Сыватмалли учрежденисенче Отечественнăй вăрçă инвалидсене тĕрлĕ ĕçе вĕрентмелли курссемпе мастерскойсем уçаççĕ.

ССР КОНСТИТУЦИЙӖ СИНЧЕН КАЛАҪУСЕМ

Совет государстви*)

РАБОЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕН СОЮЗӖ

Советсенче пирӗн обществӑн икӗ класӗнчен суйланӑ депутатсем государство ӗҫӗнче пӗрле килӗштерсе ӗҫлени рабочисемпе хресченсен союзӗ пурнӑҫа кӗрсе пырать. Большевиксен партийӗ мӗн пуҫланса кайнӑранпах рабочисемпе хресченсене тачӑ союза пӗрлештерессишӗн кӗрешнӗ. Вара рабочисемпе хресченсен ҫак союзне туса ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн тин пирӗн ҫӗршывра ӗҫсыннисем хӑйсен мӗнпур ҫӗнтерӗвӗсене тума пултарчӗҫ.

Чӑнах та, рабочисемпе хресченсен союзӗ пулман пулсан, эпир капиталистсемпе помещиксене ҫӗнтерме пултарӑттӑмӑр-ши? Паллах, ҫӗнтерме пултараймастамар.

Рабочисемпе хресченсен союзӗ пулман пулсан, эпир социализмлӑ общество тума тата Совет Союзӗ пек хӑватлӑ государство туса хума пултарӑттӑмӑр-ши? Паллах, пултараймастӑмӑр.

Фашистла Германие хирӗҫ пынӑ хаяр та йывӑр вӑрҫӑра Совет Союзӗ рабочисемпе хресченсен ҫирӗп союзӗ ҫине шанса тӑман пулсан, эпир тӑшмансене ҫӗнтерме пултарӑттӑмӑр-ши? Паллах, пултараймастӑмӑр.

Халӗ ӗнтӗ Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра пирӗн ҫӗнтерӳпе пӗтнӗ хыҫҫӑн, рабочисемпе хресченсен союзне татах та ҫирӗплетсе пымалла. Вӑл пире хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыва ют ҫӗршыв захватчикӗсем кӳрсе хӑварнӑ сурансене хӑвӑртрах тӳрлетме, Совет государствин экономика телӗшӗнчи вӑй-хӑватне ҫирӗплетсе пыма, социализмлӑ строя малалла аталантарма, хамӑрӑн пурнӑҫа тӑтӑшах лайӑхлатса пыма пулӑшмалла.

РАБОЧИ КЛАСС МӖНШӖН ХРЕСЧЕНСЕН МАССИСЕН ҪУЛПУҪӖ ПУЛСА ТӐНӐ

Патшапа помещиксене хирӗҫ кӗрешнӗ вӑхӑтра, кивӗ пурнӑҫран ҫӗнӗ пурнӑҫ патне куҫнӑ историллӗ ҫул ҫинче, патша влаҫӗпе капитализмран социализм патне куҫнӑ ҫул ҫинче рабочи класс хресченсен массисене ертсе пынӑ. Рабочисемпе хресченсен союзӗнче рабочи класс яланах малта пыракан вӑй пулнӑ. Ҫакна мӗнпе ӑнлантарса памалла-ха?

Рабочисем йышлӑ массӑсемпе хуласемпе промышленность центрӗсенче пурӑнаҫҫӗ. Шултӑра предприятисенче пиншер, вунӑ пиншер рабочи пӗрле ӗҫлеҫҫӗ. Ҫакӑ ӗнтӗ мӗн ӗлӗк-авалтанпах рабочисене капиталистсемпе вӗсен влаҫне хирӗҫ кӗрешме, пӗтӗм ӗҫсыннисене ирӗке кӑларассишӗн кӗрешме пӗрлештерсе организацилеме пулӑшнӑ. Шӑпах ҫакӑн пирки ӗнтӗ фабрикӑсемпе заводсенче рабочисен революциллӗ партийӗ, большевиксен партийӗ—рабочи класа социализмшӑн кӗрешме организацилекенӗ пуҫланса кайнӑ.

Рабочисен хӑйсен ӗҫ хатӗрӗсем ҫук. Капитализм вӑхӑтӗнче рабочисен хӑйсен вӑйне предприяти хуҫисемпе эксплоататорсене сутма тивет. Ҫавӑнпа та рабочисем капиталистсенчен фабрикӑсемпе заводсене туртса илсе вӗсене социализмла государствӑн харпӑрлӑхӗ туса хума тӑрӑшаҫҫӗ. Социализм идейисене рабочисем хӑвӑртрах та ҫӑмӑлрах ӑнланса илеҫҫӗ.

Рабочисен пурнӑҫпа ӗҫ условийӗсем те рабочи класа обществӑн малта пыракан класӗ—чи революциллӗ, организациллӗ, ӑс-тӑнлӑ класӗ туса хума пулӑшса пынӑ. Ҫав условисемех рабочи класа пусмӑрлӑхпа эксплоатацие хирӗҫ, социализмшӑн кӗрешнӗ вӑхӑтра ҫирӗплетсе пынӑ.

Хресченсен положенийӗ обществӑра вара пачах та урӑхла пулнӑ. Хресченсем пӗтӗм ҫӗршыв анлӑшӗнче сапаланса пурӑнаҫҫӗ, вӗсене организацилесе ертсе пыракан вӑй кирлӗ. Ӗлӗкхи вӑхӑтра хресченсем кашни хӑйсен уйрӑм хуҫалӑхӗсене тытса тӑнӑ, кашни хресчен хӑйӗн ҫӗр участокӗ ҫинче ӗҫленӗ, унӑн хуҫалӑхӗ ҫав тери мӗскӗн пулсан та, вӑл ӑна пур майсемпе те хӳтӗлеме тӑрӑшнӑ. Совет влаҫӗн малтанхи ҫулӗсем вӑхӑтӗнче хресченсен ытларахӑш пайӗ уйрӑм вак хуҫасем пулса ӗҫленӗ.

Революциччен вӗсене ӗҫпе пурнӑҫ условийӗсем те пӗрлешме май паман, пачах та урӑхла, вӑл условисем хресченсене ытларах сапаласа пынӑ, ҫав условисем хресченсене нимӗнле ҫӑмӑллӑхсем те паман, вӗсене организацилеме, помещиксемпе кулаксене хирӗҫ пӗрлешсе кӗрешме кансӗрлесе пынӑ. Патшапа помещиксен влаҫне хирӗҫ кӗрешессине организацилесси ҫинчен хресченсем хушшинче калаҫу та пулма пултарайман. Рабочисем хресченсем патне пулӑшу пама пынӑ, хресченсене вӗсем ҫӗрпе ирӗклӗх илме пулӑшнӑ.

Хресченсем ӗлӗк социализм ҫинчен шухӑшламан та. Анчах та пӗр социализм ҫеҫ хресченсен, ӗҫхресченӗсен тӗп интересӗсене пӗтӗмпех тивӗҫтерме пултарнӑ. Рабочисем вӗсене мӗн вӑл социализм иккенне, социализмлӑ йӗркесем хресченсене хӑш енчен усӑ панине ӑнлантарса панӑ. Рабочисем Совет государстви ячӗпе яла пырса хресченсене колхозсем тума, ҫӗрӗҫӗн малта пыракан техникине вӗренме пулӑшнӑ.

Ҫак сӑлтавсене пула ӗнтӗ рабочи класс Совет влаҫӗшӗн, телейлӗ пурнӑҫшӑн пынӑ кӗрешӳре ертсе пыраканӗ, хресченсен массин ҫулпуҫӗ пулса тӑчӗ.

СОВЕТ ГОСУДАРСТВИН ПӖРРЕМӖШ ТАТА ТӖП НИКӖСӖ

ССР Союзӗнче социализмлӑ обществӑна туса ҫитернӗ ӗнтӗ. Анчах та ҫак рабочи класс ертсе пыни текех кирлӗ мар тенине пӗлтерет-и? Ҫук. Вӑл ӑна пӗлтермест. Вӑл акӑ мӗншӗн ӑна пӗлтермест.

Пирӗн хамӑрӑн советлӑ социализмлӑ обществӑна малалла ҫирӗплетсе аталантарса пымалла. Пирӗн тӑшман оккупациленӗ районсенчи хуҫалӑхпа культура учрежденийӗсене май килнӗ таран хӑвӑртрах юсаса ура ҫине тӑратмалла. Пирӗн пиншер промышленноҫпа ялхуҫалӑх предприятийӗсене ҫӗнӗрен тумалла, ӗҫ тухӑҫлӑхне татах та ӳстермелле, хамӑрӑн пурнӑҫа татах та илемлӗрех тумалла. Пирӗн социализмлӑ обществӑн ӑс-тӑнлӑ та ӗҫчен ҫыннисене, социализмлӑ хуҫалӑха пӗлекен пултарулӑ работниксене воспитани парса ҫитӗнтермелле, социализмлӑ хуҫалӑхшӑн усӑллӑ ҫынсене ҫамрӑксенчен ҫеҫ мар, ваттисенчен те хатӗрлемелле. Пирӗн ҫӗршывра халӗ ӗлӗкхи шухӑш-кӑмӑлран, хӑнӑхусемпе тӗшмӗшсенчен уйрӑлман ҫынсем те сахал мар-ха.

Паллах, ҫав йывӑр задачӑсене татса парас ӗҫре обществӑн малта пыракан класӗ—рабочи класӗ ертсе пыни кирлӗ.

Пирӗн обществӑра нимӗнле эксплоататорла классемпе сийсем те ҫук. Ҫакӑ ӗнтӗ пирӗн ҫӗршывра советӑн обществӑллӑ тата государствӑллӑ стройне хирӗҫ кӗрешме пултаракан тӑшманла вӑйсем ҫуккине пӗлтерет (халӗ Совет влаҫне хирӗҫ пыракан тӑшманла ҫынсем пӗчченшер кӑна юлнӑ). Анчах та Совет Союзӗ, рабочисемпе хресченсен социализмлӑ государстви капитализмлӑ ҫӗршывсен йӗри-тавралӑхӗнче тӑрать-ха. Пирӗн Тӑван ҫӗршыва тулашӗнчен темиҫе хутчен те пиле-киле тапӑнчӗҫ, ун пек чухне вара пирӗн ҫӗршыв умне мӗн тери йывӑр та кӑткӑс задачӑсем тухса тӑнине эпир лайӑх пӗлетпӗр. Ҫавӑн пек тапӑнас хӑрушлӑх малашне пулмӗ тесе эпир нимӗн чухлӗ те шанса тӑма пултараймастпӑр.

Паллӑ ӗнтӗ, ҫакӑн пек условисенче пирӗн обществӑна малта пыракан класс—рабочи класс ертсе пыни кирлӗ.

Советлӑ социализмлӑ обществӑн, Совет государствишӗн **рабочи класс ертсе пыракан рабочисемпе хресченсен союзӗ** мӗн тери аслӑ вырӑн йышӑнса тӑнине эпир пӗлетпӗр. Ҫакӑн пек союз ҫинчен Сталин юлташ ҫапла калать:

«Ҫакӑ вӑл Совет Республикин пӗрремӗш тата тӗп никӗсӗ пулса тӑрать».

СОВЕТ ОБЩЕСТВИНЕ ГОСУДАРСТВО ЕНЧЕН ЕРТСЕ ПЫНИ

Советсенче рабочи класпа хресченсен союзне пирӗн обществӑри икӗ класӑн **государствӑллӑ союзӗ** вырӑнне хурса ҫирӗплетнӗ. Ун ҫинчен Совет Союзӗн Конституцийӗн 1-мӗш статьинче ҫапла ҫырса хунӑ:

«Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗ рабочисемпе хресченсен социализмлӑ государстви пулса тӑрать».

Пур Советлӑ республикӑн Конституцийӗ те ҫавӑн пек сӑмахсемпе пуҫланать. Вӑл рабочисемпе хресченсен союзне ҫав класен государствӑллӑ союзӗ вырӑнне хурса ҫирӗплетсе парать. Тӗслӗхрен, Белорусси республикин конституцийӗнче эпир ҫакна вулатпӑр:

«Белорусси Советлӑ Социализмлӑ Республика рабочисемпе хресченсен социализмлӑ государстви пулса тӑрать».

Обществӑна ертсе пырассине рабочи класс мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пырать-ха? **Ҫакна вӑл ӗҫсынни депутачӗсен Совечӗсем урлӑ пурнӑҫа кӗртсе пырать.**

Советсенче ӗҫсыннисен депутачӗсем хушшинче рабочисен те, хресченсен те, интеллигенцин те представителӗсем пур. Советсем урлӑ рабочи класс ӗҫсыннисен мӗнпур массине пӗтӗҫтерсе, воспитани парса вӗрентсе, хӑй хыҫҫӑн ертсе пырать. Советсем урлӑ рабочи класс мӗнпур совет обществине государство енчен ертсе пырать.

Пирӗн социализмлӑ общество стройӗ капитализмлӑ стройран, тӗпрен илсен, ҫакӑнпа уйрӑлса тӑрать: **пирӗн ҫӗршывра обществӑна государство енчен ертсе пырасси (диктатура) рабочи класс аллинче тӑрать, капитализмлӑ ҫӗршывсенче вара обществӑна государство енчен буржуази ертсе пырать.** Пирӗн обществӑна государство енчен ертсе пырас ӗҫре пур ӗҫсыннисен (рабочисен, хресченсен, интеллигенцин) интересӗсене те шута илеҫҫӗ, капитализмла ҫӗршывсенче вара буржуази интересӗсене хӳтӗлесе пыраҫҫӗ.

Пирӗн ҫӗршывӑн историйӗ тата Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн урокӗсем ӗненмеллех ҫакна каласа параҫҫӗ: рабочисемпе хресченсен Советлӑ социализмлӑ государстви Тӑван ҫӗршывӑн чыслӑхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн, ирӗклӗ те ырӑ пурнӑҫшӑн пыракан кӗрешӳре чи тӗп, чи хӑватлӑ хӗҫпӑшал пулса тӑрать. Мирлӗ вӑхӑтра Совет государстви хуҫалӑхпа культура строительствине чи лайӑх организацилеме пултаракан государство пулса тӑрать. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вӑл тӑшмана хирӗҫ тӑрса ӑна ҫӗмӗрсе тӑкмашкӑн пӗтӗм халӑх вӑйне пуринчен лайӑхрах организацилерӗ.

Хамӑрӑн Совет государствин вӑй-хӑватне татах та ытларах ҫирӗплетер!

КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙӖН РОЛӖПЕ ПӖЛТЕРӖШӖ

Пирӗн обществӑн малта пыракан класӗн хӑйӗн малта пыракан отрячӗ пур. Вӑл чи ӑс-тӑнлӑрах, опытлӑрах, кӗрешӳре ытларах пиҫӗхнӗ юлташсенчен тӑрать. Пирӗн ҫӗршывра рабочи класӑн ҫавӑн пек отрячӗ аллӑ ҫула яхӑн каярах организациленнӗ. Вӑл—большевиксен, коммунистсен партийӗ ятлӑ. Ҫав партие организацилесе ертсе пыраканӗсем—**В. И. Ленинпа И. В. Сталин.**

Рабочи класа мӗн тума парти кирлӗ-ха?

ССР Союзӗнчи рабочи класс питӗ йывӑр та кӑткӑс условисенче пурӑннӑ. Унӑн вӑйлӑ та чее тӑшмансене хирӗҫ хаяррӑн кӗрешме тивнӗ. Ҫапӑҫури ҫар пекех, рабочи класа та революциллӗ кӗрешӳре **ертсе пыракан боевой штаб** кирлӗ. Рабочи класшӑн ҫавӑн пек штаб ӗнтӗ большевиксен партийӗ пулса тӑрать.

Рабочи класӑн, Совет Союзӗнчи ӗҫсыннисен нумай тӗрлӗ организацисем пур. Вӗсем Советсем—мӗнпур совет гражданӗсене нимӗнпе те уйӑрса тӑмасӑр пӗрлештерекен государствӑллӑ организаци. Вӗсем—рабочисемпе служащисене пӗрлештерсе тӑракан профсоюзсем. Вӗсем—хресченсемпе алӑстаҫсене пӗрлештерсе тӑракан коопераципе колхоз организацийӗсем. Вӗсем—ҫамрӑксен организацийӗсем, тӗрлӗрен наукӑллӑ организацисем, оборонӑпа спорт тата ытти тӗрлӗ обществӑллӑ организацисем. Ҫав организацисенче вуншар миллион ҫын членра тӑрать.

Ҫав организацисем кашниех хӑйсен ӗҫне туса пыраҫҫӗ, вӗсем кашниех хӑйсен пурнӑҫӗпе пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем пурте ӗҫсыннисен интересӗсемшӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Анчах та рабочи класӑн, ӗҫсынни массисен мӗнпур организацийӗсен ӗҫне пӗтӗҫтерсе кирлӗ пек **тытса пыма пултараканӑн, ҫав организацисене пӗр пӗтӗмӗшле ертсе пыма** пултаракан организаци пур-ши?

Пур. Ҫавӑн пек **тӗп, ертсе пыракан организаци—пирӗн парти пулса тӑрать.** Мӗншӗн?

Парти вӑл рабочи класӑн, хресченсен, интеллигенцин малта пыракан ҫыннисенчен тӑрать. Ҫав ҫынсем ӗҫсынни массисем хушшинче пурӑнса ӗҫлеҫҫӗ, вӗсем парти мар пур организацисемпе те тачӑн ҫыхӑннӑ, вӗсен пуҫӗнче тӑраҫҫӗ. Хӑйӗн опычӗ тӑрӑх, ӗҫсыннисене шухӑш-кӑмӑл енчен ертсе пыма пултарни тӑрӑх большевиксен партийӗ вӑл—мӗнпур организацисен ӗҫне ертсе пырассине, ӗҫсыннисен пӗтӗм кӗрешӗвне ертсе пырассине организацилесе пӗтӗҫтерме пултаракан гӗтен пӗр парти пулса тӑрать.

Парти вӑл парти мар нихӑш организаци вырӑнне те пулма пултараймасть. Парти органӗсем парти мар организацисене приказсем тӑрӑх ертсе пымаҫҫӗ, вӗсен ҫав организацисене кулленех ӗҫре пулӑшса пымалла. Парти мар организацисенче членра тӑракан коммунистсем ҫав организацисене парти ертсе пынине ӳкӗтлесе йышӑнтараҫҫӗ.

Тӗслӗхрен, ӗҫсынни депутачӗсен Совечӗсенех илер. Халӑх унта хӑйсен чи лайӑх ҫыннисене суйлать. Советӑн ертсе пыракан вырӑнӗсенче ӗҫлеме парти хӑйӗн кандидачӗсене тӑратать. Вара государство органӗн ертсе пыракан вырӑнӗнче ӗҫлеме парти тӑратнӑ кандидата суйласан, вӑл кандидат тӗрӗсленӗ, халӑха парӑннӑ ҫын пулнине пӗлтерет.

Партин вӑйӗ вӑл революциллӗ малта пыракан теорире—марксизм-ленинизмра, хӑйӗн организациллӗхӗнче, хӑйӗн ретӗсенчи тимӗр пек ҫирӗп дисциплинӑра, тӑшмансемпе хирӗҫ кӗрешнӗ чухне икӗ питлӗ пулманнинче, халӑх массисемпе тачӑн ҫыхӑнса тӑнинче пулать.

Совет государствинче коммунистсен партийӗн ертсе пыракан вырӑнне Сталинла Конституци тӑрӑх ҫирӗплетсе панӑ. Унта ҫапла каланӑ: коммунистсен партийӗ «ӗҫсыннисен мӗнпур организацийӗсен, обществӑллӑ организацисен те, ҫавӑн пекех тата государствӑллӑ организацисен те, ертсе пыракан йышӗ пулса тӑрать». Конституцире тата ҫапла каланӑ: коммунистсен партийӗ «социализмлӑ строя ҫирӗплетсе малалла аталантарассишӗн пыракан кӗрешӳре ӗҫсыннисен малта пыракан отрячӗ пулса тӑрать».

Сталин юлташ коммунистсен партине мирлӗ строительство вӑхӑтӗнче те, ҫавӑн пекех тата вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче те **совет халӑхӗн ертсе пыракан, хавхалантаракан тата организацилекен вӑйӗ** тесе ят панӑ.

Большевиксен партийӗ ертсе пынипе пирӗн ҫӗршыври ӗҫсыннисем ирӗклӗх кӗрешсе илчӗҫ, социализмлӑ общество туса хучӗҫ. Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче парти совет ҫыннисен вӑй-хӑватне пӗтӗҫтерсе пӗрлештерчӗ, ӑна кӗрешӗве организацилерӗ, ҫавӑнпа вара тӑшмана татӑклӑнах ҫӗнтерессине патне илсе ҫитерчӗ.

Ҫавӑнпа та совет халӑхӗ коммунистсен партине чун-чӗререн шанса тӑрать, ӑна хӑйӗн тӑван партийӗ тесе ҫав тери юратать. Коммунистсен партийӗ Совет государствин вӑй-хӑватлӑхӗн тӗп сӑлкуҫӗсенчен пӗри пулса тӑрать.

В. КАРПИНСКИЙ.

---

*) Ӗҫӗ. Пуҫламӑшӗ «Чӑваш Коммуни» 219 №-че.

ВӐРМАН ХАТӖРЛЕМЕЛЛИ ТАТА ТУРТТАРМАЛЛИ ПЛАНА ВӐХӐТРА ТУЛТАРАССИШӖН

ЕГӖРПЕ. Иккӗмӗш Ирҫе'ри «Комбайн» колхозӑн январӗн 1-мӗшӗ тӗлне 110 кубометр йывӑҫ хатӗрлемелле, 280 кубометр турттармалла. Кунсӑр пуҫне, колхозӑн «Ударник» артель валли 250 кубометр йывӑҫ хатӗрлемелле. Эпир ҫак асӑннӑ ӗҫсене вӑхӑтра пурнӑҫлас тесе, кашни колхозникех задани парса тухрӑмӑр. Халӗ вӑрманта ӗҫлекенсем социализмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗҫ. Вӗсем плана йывӑҫ касса хатӗрлес тӗлӗшпе декабрӗн 5-мӗшӗ тӗлне, турттарас тӗлӗшпе декабрӗн 20-мӗшӗ тӗлне тултарма обязательство илчӗҫ.

И. МОКЕЕВ,
Колхоз председателӗ.

Мускав Совечӗн чаплӑ ларӑвӗнче В. М. Молотов тунӑ доклад ҫинчен ют ҫӗршывсенче мӗн ҫыраҫҫӗ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи хаҫатсем В. М. Молотов докладне пичетлеҫҫӗ. Ҫав доклад ҫинчен ҫырнӑ статьясенче ӑна мир тӑвас ӗҫшӗн паха доклад тесе хаклаҫҫӗ.

В. М. Молотов атом бомби ҫинчен тата блоксем ҫинчен асархаттарни пирки Юнайтед Пресс агентствин политика обозревателӗ Кимл ҫапла ҫырать: хальхи вӑхӑтра ҫавӑн пек уҫҫӑн каланине нумай обозревательсем лайӑх сӑмах тесе шутлаҫҫӗ, мӗншӗн тесен ҫакӑн пек калани «пӗр-пӗрин пирки иккеленнине пӗтерсе лартма тата пӗр-пӗринпе лайӑхрах ҫыхӑнса тӑрассипе хатӗрлеме пулӑшать». Кимл малалла ҫапла калать: Пӗрлешнӗ нацисем ҫинчен Молотов калани тата вӑл Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Англи тата Совет Союзӗ хушшинчи пӗрлӗхе сыхласа хӑварма пулӗ тесе калани «уйрӑмах пысӑк шанчӑк парать».

Филадельфире тухакан «Рекорд» хаҫат ҫапла ҫырать: В. М. Молотов докладӗнче ҫирӗп каланӑ, ҫав вӑхӑтрах унта килӗшес майлӑ каланӑ. Молотов, Совет Союзӗн позицийӗ ҫинчен каласа парса, «акӑлчансемпе тата американецсемпе килӗштерсе ӗҫлеме май тупса пачӗ», тет.

В. М. Молотов докладне флот кунӗ Трумэн каланӑ сӑмахпа танлаштарса пӑхса, хаҫат ҫапла ҫырать: «Молотов, Трумэн ыйтнӑ пек, «кирлӗ базӑсем» ыйтман: Трумэн Монроэ доктрини ҫинчен темиҫе хут та каланӑ пулсан, Молотов хӗвелтухӑҫӗнчи блок ҫинчен каламан. Анчах апла пулсан та, Совет Союзӗ мӗне тӗп йывӑрлӑхсем тесе шутлани ҫинчен Молотов уҫҫӑн каласа панӑ».

ОТТАВА, ноябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Канадӑри хаҫатсемпе радио В. М. Молотов юлташӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 28 ҫул тултарнӑ май тунӑ доклачӗ ҫинчен питӗ нумай ҫыраҫҫӗ, питӗ нумай калаҫаҫҫӗ. Хаҫатсем ҫав докладран пысӑк вырӑнсене илсе, ҫав тери пысӑк заголовоксемпе пичетлеҫҫӗ.

КАИР, ноябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Египетри ирхи хаҫатсемпе каҫхи хаҫатсем (араб чӗлхипе тата Европӑри чӗлхесемпе пичетлекеннисем) пӗрремӗш страницисенче Молотов юлташ докладӗнчен нумай вырӑнсене илсе пичетленӗ, ҫавӑн пекех тата Европӑрипе Америкӑри хаҫатсем ҫав доклад ҫинчен мӗн ҫырнине илсе пичетленӗ.

ПАРИЖ, ноябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Франс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, паян ирхине тухнӑ хаҫатсем Мускав Совечӗн чаплӑ ларӑвӗнче В. М. Молотов тунӑ доклад ҫинчен ҫырни хаҫатсенче тӗп вырӑн йышӑнса тӑрать. «Депеш де Пари» хаҫат ҫав доклад паллӑ ыйтусем пирки тӗрӗсрех каласа пани кӑмӑла кайни ҫинчен ҫырать, союзниксем мӗн пирки тӗрлӗ шухӑшланин сӑлтавӗсене кӑтартса парать.

Анчах союзниксем тӗрлӗ ыйтусем пирки тӗрлӗ шухӑшлани ытла пысӑк мар, тесе ҫырать хаҫат. Ӗҫсем ҫывӑх вӑхӑтрах лайӑх еннелле улшӑнса кайма пултараҫҫӗ, вара Пӗрлешнӗ нацисем, Молотов каланӑ пек, каллех пӗрле пулӗҫ. Молотов хӑйӗн шухӑшне пӗтӗм чӗререн каласа панӑ, анчах вӑл лару-тӑрӑва ытларах ҫивӗчлентерсе яма пултаракан пӗр сӑмах та каламан.

«Ордр» хаҫат В. М. Молотов доклачӗ ҫинчен «ырӑ сӗнӳсем тума май тупса панӑ» ятлӑ статья пичетлесе кӑларнӑ.

СТОКГОЛЬМ, ноябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Мускав Совечӗн чаплӑ ларӑвӗнче В. М. Молотов тунӑ доклад ҫинчен «Моргонтиднинген» хаҫат ҫапла ҫырать:

«Молотов докладӗнчен икӗ тӗп вывод тума пулать: Совет Союзӗ мирлӗ вӑхӑтра та союзниксемпе уҫҫӑн ҫыхӑнса тӑрасшӑн. Анчах та Совет Союзӗ, вӑрҫӑн тӗп йывӑрлӑхне тӳссе ирттернӗскер, хӑйне союзниксемпе пӗр танах шутласа йышӑнтарасшӑн. Тӗрӗссипе каласан, ҫак требовани вӑл пысӑк мар, хӗвеланӑҫӗнчи державӑсем ӑна сирсе яма пултараймаҫҫӗ. Молотов доклачӗ тата малашнехине ӗненнине кӑтартакан доклад пулчӗ. Вӑл вӑрҫӑн сӑлтавӗсем ҫинчен уҫҫӑн та конкретно каласа парать. Хӗвеланӑҫӗнчи державӑсен блокӗсемпе групписем агрессие чарас вырӑнне ӑна пулӑшаҫҫӗ, тесе калани тӗрӗс сӑмах. Вӑрҫӑччен Нацисен Лиги вӑйсӑррине пула Совет Союзӗ нумай хӗн курчӗ».

ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ҪАМРӐКСЕН КОНФЕРЕНЦИЙӖ ХӐЙӖН ӖҪНЕ ПӖТЕРНӖ

ЛОНДОН, ноябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксен конференцийӗн каҫхи ларӑвӗнче тӗрлӗ ҫӗршывсенчи ҫамрӑксем пӗр-пӗрне культура япалисем парса тӑрас ыйтупа ӗҫленӗ комиссин сӗнӗвӗсене тата спортпа ҫулҫӳрӳ ыйтӑвӗсемпе ӗҫленӗ комиссин сӗнӗвӗсене йышӑннӑ. Конференци тӗнчери мӗнпур ҫӗршывсенчи ҫамрӑксем пӗр-пӗринпе культура енчен ҫыхӑнса тӑнине тата пӗр-пӗрне культура япалисем панине мӗн вӑй ҫитнӗ таран пулӑшма сӗнет, правительствӑсенчен ҫав ӗҫ валли хӑйне уйрӑм фондсем уйӑрса хума тата кашни ҫӗршывра культура ҫыхӑнӑвӗпе улӑшу центрӗсем организацилеме ыйтать. Пӗтӗм тӗнчери федераци ҫумӗнче пӗтӗм тӗнчери библиотекӑпа музей организацилемелле, ҫав библиотекӑпа музее мӗнпур ҫӗршывсенчи искусствӑпа литература тата халӑх творчествин произведенийӗсене пухмалла. Пӗтӗм тӗнчери федерацин хӑйӗн пичет тата хаҫат-журналсем пулмалла. Пур ҫӗршывсенчи шкулсенче те пӗр ют ҫӗршыв чӗлхине те пулин вӗрентме тӑрӑшмалла. Час-часах пӗтӗм тӗнчери выставкӑсемпе фестивальсем тумалла. Пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксен юррине ҫырса хатӗрлеме пӗтӗм тӗнчери писательсемпе поэтсем хушшинче конкурс туса ирттермелле. Ҫавӑн пекех тата Пӗтӗм тӗнчери спорт кунӗ тума йышӑннӑ. Конференци спортпа ҫулҫӳрӳ ӗҫне аталантармалли мерӑсем палӑртса хунӑ.

Конференци мӗнпур демократиллӗ ҫамрӑксене чӗнсе каланинче Пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксен федерацийӗн уставне ӑнлантарса панӑ, конференцире пулман организацисене ҫав федераци ҫумне хутшӑнма сӗннӗ. Ҫав организацисем устава тӳрлетесшӗн е ун ҫумне хушса курасшӑн пулсан, вӗсем сӗннине Совет тӗплӗн пӑхса тухӗ те вара Пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксен тепӗр конгресӗнче сӳтсе явма тӑратӗ; ҫав конгресс 1948 ҫултан кая юлмасӑр пухӑнмалла.

Конференци федерацин финанс фондне тума йышӑннӑ тата член укҫи мӗн чухлӗ тӳлемеллине палӑртса хунӑ.

Паян конференци Пӗтӗм тӗнчери федераци Совечӗн составне ҫирӗплетнӗ. Кандидатсене нациллӗ делегацисем суйланӑ. Устав тӑрӑх ҫав членсене конференци ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн вырӑнсенчи нациллӗ организацисем ҫирӗплетмелле. Вырӑнти организацисем паян суйланӑ членсем вырӑнне Совет членӗ пулма ытти ҫынсене яма пултараҫҫӗ.

Совет Союзӗнчен Пӗтӗм тӗнчери федераци Советне Н. Михайлов, С. Мишакова, В. Иванов, Е. Федоров, В. Богатырев тата А. Шелепин юлташсем кӗнӗ; Украина ССР-ӗнчен Федераци Советне В. Костенкӑпа П. Пронько кӗнӗ; Белорусси ССР-ӗнчен—М. Зимянин тата Л. Войнова; Эстони ССР-ӗнчен—А. Мери; Литва ССР-ӗнчен — И. Мацевичус; Латви ССР-ӗнчен—И. Пинксис кӗнӗ.

ЛОНДОН, ноябрӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Ноябрӗн 10-мӗшӗнче Лондонра Пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксен конференцийӗ хӑйӗн ӗҫне пӗтернӗ.

Пӗтӗм тӗнчери демократиллӗ ҫамрӑксен федерацийӗн Совечӗн председателӗ пулма суйланӑ Ги де Буассон (Франци) пӗтӗм тӗнчери ҫӗнӗ федерацин Совечӗн вице-председателӗсен тата секретарӗсен ячӗсене каласа панӑ. Залри ҫынсем ҫакна, тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илнӗ. Совет вице-председателӗсем пулма ҫаксене суйланӑ: ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн секретарьне Н. А. Михайлова, США-ри ҫамрӑк хӗрарӑм христианкӑсен ассоциацийӗн индустри советӗнчен Эльза Грейвса, Англири студентсен христианла юхӑмӗнчен Генри Джонса тата Китайри ҫамрӑксен «Саньминджун» ятлӑ организацийӗн представительне Чена.

Унтан конференци пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксене чӗнсе калани текстне пӗрсасӑн йышӑннӑ.

Англипе Совет Союзӗн туслӑх комитечӗн представителӗ Родней Добсон конференцие ҫапла каланӑ: пирӗн организаци ҫак вӑрҫӑра вилнӗ вырӑс ҫамрӑкӗсене асӑнса Сталинград хулинче пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксен центрне туса хумашкӑн 50.000 кӗренке стерлинглӑх фонд тӑвас тӗлӗшпе кампани ирттерет, тенӗ.

Америка делегацийӗ сӗннипе конференци Рузвельт президента хисеплесе резолюци йышӑннӑ.

Конференцие хупнӑ чухне де Буассон ҫамрӑксене конференцире ӗҫленӗ пек хастарлӑн та килӗштерсе ӗҫлесе тӑма чӗннӗ. Председателӗн юлашки сӑмахӗсене конференци тӑвӑллӑн алӑ ҫупса тата савӑнӑҫлӑн кӑшкӑрса хапӑл тунӑ.

ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ХӖРАРӐМСЕН КОНГРЕСНЕ ПУХАССИ ҪИНЧЕН

ЛОНДОН, ноябрӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен федерацийӗн генеральнӑй секретарӗн арӑмӗ Сайян госпожа Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен конгресне пухас тӗлӗшпе ӗҫлекен Пуҫару комитечӗн членӗ пулса Лондона пынӑ. Ноябрӗн 9-мӗшӗнче вӑл хаҫат представителӗсене ҫапла каласа панӑ: 37 ҫӗршыв конгреса пыма чӗннине йышӑннӑ; ҫав конгресс Париж хулинче ноябрӗн 26-мӗшӗнче пухӑнать, тенӗ.

ВЕНГРИРИ СУЙЛАВӐН РЕЗУЛЬТАЧӖСЕМ

БУДАПЕШТ, ноябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Шалти ӗҫсен министерствин суйлав тӗлӗшпе ӗҫлекен ушкӑнӗ Венгрин халӑх пухӑвне суйланин итогӗсене шутласа пӗтернӗ. Суйлава 4.701.026 суйлавҫӑ хутшӑннӑ: Вӗсем ҫак партисемшӗн сасӑланӑ: ялсенчи вак хуҫасен партийӗшӗн—6.680.227 суйлавҫӑ, социал-демократсен партийӗшӗн—818.082 суйлавҫӑ, коммунистсен партийӗшӗн—795.659 суйлавҫӑ, хресченсен нациллӗ партийӗшӗн — 322.741 суйлавҫӑ, гражданла-демократиллӗ партишӗн—78.322 суйлавҫӑ, радикалсен партийӗшӗн—5.695 суйлавҫӑ сасӑланӑ.

Шалти ӗҫсен министерстви официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх, халӑх пухӑвне ҫакӑн чухлӗ депутат суйланнӑ: ялсенчи вак хуҫасен партийӗнчен—242 ҫын, коммунистсен партийӗнчен—70 ҫын, социал-демократсен партийӗнчен—69, хресченсен нациллӗ партийӗнчен — 23, гражданла-демократиллӗ партин—2 ҫын суйланнӑ. Хӑшпӗр суйлав округӗсенчен протоколсем ҫитеймен-ха, ҫавӑнпа, кам пӗлет, ҫак цифрӑсем кӑшт улшӑнма пултарӗҫ.

АЛБАНИПЕ ДИПЛОМАТИЛЛӖ ҪЫХӐННИ

ТИРАНА, ноябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Совет Союзӗн Албанири ҫар миссийӗн начальникӗ Соколов полковник Албанин вӑхӑтлӑх правительствин пуҫлӑхӗ Энвер Ходжа патне пынӑ та ӑна Совет правительствин нотине панӑ. Нотӑра ҫапла каланӑ: нимӗҫсемпе итальянец захватчикӗсене хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпах Совет Союзӗ Албани халӑхӗ хӑйӗн никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн паттӑррӑн ҫапӑҫнине кӑмӑлласа сӑнаса тӑчӗ. Ҫапла кӗрешсе Албани халӑхӗ тӑшмана ҫӗнтерес ӗҫе хӑйӗн тӳпине хывнине шута илсе тата Албани правительстви мирпе хӑрушсӑрлӑха сыхласа усрамашкӑн ытти демократиллӗ ҫӗршывсемпе килӗштерсе ӗҫлеме тӑрӑшнине асра тытса, Совет правительстви Албанипе дипломатиллӗ ҫыхӑну пуҫласа яма тата пӗр-пӗрин патне посланниксем яма йышӑнчӗ, тенӗ.

Министрсен совечӗн председателӗ Энвер Ходжа генерал Совет правительствин ҫак сӑмахне кӑмӑлласа йышӑннӑ.

АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ АЛБАНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШӐННӐ

ЛОНДОН, ноябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви официальнӑй пӗлтерӳ тӑрӑх ҫапла калать: Албанин халӑх правительстви ҫывӑх вӑхӑтрах ирӗклӗ суйлав туса ирттерме тӑрӑшнине шута илсе, Англи правительстви ӑна йышӑннӑ.

СОВЕТ ҪАРӖСЕНЕ ЧЕХОСЛОВАКИРЕН ИЛСЕ ТУХМА ПУҪЛАНИ

ПРАГА, ноябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Ҫартан киле ямалли план тӑрӑх, Совет ҫарӗсене Чехословакирен илсе тухма пуҫланӑ. Унти ҫарсене ҫитес ик-виҫӗ эрне хушшинче илсе тухса пӗтереҫҫӗ.

АМЕРИКӐРИ ПӖРЛЕШӲЛЛӖ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО ДЕПАРТАМЕНЧӖ КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Государство департаменчӗ ҫапла пӗлтернӗ: Пӗрлешӳллӗ Штатсен ҫар влаҫӗсем Америка ҫарӗсене Чехословакирен 1945 ҫулхи декабрӗн 1-мӗшӗччен илсе тухма шутлаҫҫӗ, тенӗ.

ИНДОНЕЗИРИ ӖҪСЕМ

ЛОНДОН, ноябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ Батавирен пӗлтернӗ тӑрӑх, ноябрӗн 8-мӗшӗнче ирхине ирех Батави хулинче ҫапӑҫусем пуҫланса кайнӑ, унта 500 индонезиец ытла ҫапӑҫать, тесе шутлаҫҫӗ. Союзниксен ҫарӗсем васкаса ҫав хулана каяҫҫӗ, хула патне пыракан хӗҫпӑшаллӑ индонезиецсене тытса чарма хӑтланаҫҫӗ. Бандунгра индонезиецсен чылай пысӑк вӑйӗ пухӑнать. Хулара индонезиецсен 6 дивизийӗн штабӗ ӗҫлет, теҫҫӗ.

САН-ФРАНЦИСКО, ноябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Сан-Францискӑри радио ҫапла пӗлтерет: Англи генерал-майорӗ Мансберг Хӗвелтухӑҫ Явӑри Индонези губернаторне ҫакӑн пек ультиматум янӑ:

Союзниксен ҫарӗсем Сурабая хулине тата унӑн таврашне пырса кӗрӗҫ тата Хӗвелтухӑҫ Явӑри ытти районсене те пырӗҫ. Мана главнокомандующи Кристисон парӑнман отрядсене хӗҫпӑшалсӑрлантарма хушрӗ.

ЛОНДОН, ноябрӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио ӗнер каҫхине ҫапла пӗлтернӗ: Ява утравӗ ҫинчи Сурабайӑра Англи ҫарӗсем индонезиецсемпе ҫапӑҫаҫҫӗ. Англи ҫарӗн Индири 5-мӗш дивизийӗн чӑсӗсем доксен районӗнчен Сурабая патнелле кайма пуҫланӑ. Малтан вӗсене снайперсем ҫеҫ перкеленӗ, анчах кайрантарах индонезиецсем вӑйларах хирӗҫ тӑма пуҫланӑ. Официальнӑй пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: Англипе Инди ҫарӗсем ҫухату тӳсме пуҫланӑ пирки, Англин Сурабайӑри ҫарӗсен командующийӗ артиллерипе авиацие чӗнсе илме шут тытнӑ. 5 самолет индонезиецсен тӗреклетнӗ пункчӗсене, ҫав шутра почта ҫуртне тата правительствӑн ытти учрежденийӗсене атакӑланӑ. Голланди пӗлтернӗ тӑрӑх, сывлӑшран бомбӑсем пӑрахас умӗн Англин ҫар карапӗсем хулана 5 минут хушши персе тӑнӑ. Англин Сурабайӑри ҫарӗсен командующийӗ пур индонезиецсене те хӑйсен хӗҫпӑшалне Англи ҫарӗсене пама хушнӑ.

ФРАНЦИ ИНДО-КИТАЙӖНЧИ ӖҪСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентстви ҫапла пӗлтерет: ноябрӗн 4-мӗшӗнче ҫӗрле аннамитсем французсемпе акӑлчансен ҫарӗсемпе Сайгонран кӑнтӑртарахра выртакан Шолон районӗнче ҫӗнӗрен ҫапӑҫма пуҫланӑ. Аннамитсем ҫавӑн пекех тата Сайгонран кӑнтӑртарахри Кайхан ҫывӑхӗнче тата Сайгонран хӗвеланӑҫнерехри Гонконгра хирӗҫ тӑма пуҫланӑ.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Франци ҫарӗсем Сайгонран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре Танран районне тепӗр хут йышӑнма хӑтлансан, унта аннамитсен ҫарӗсемпе французсен хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем хушшинче хаяр ҫапӑҫусем пуҫланса кайнӑ. Ҫапӑҫусем ноябрӗн 8-мӗшӗнче каҫхине пуҫланнӑ. Французсен гарнизонӗ Англипе Инди ҫарӗсене хӑйне пулӑшма чӗннӗ, теҫҫӗ.

МАННЕРГЕЙМ ПОРТУГАЛИЕ ҪИТНӖ

ЛОНДОН, ноябрӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Финлянди президенчӗ Маннергейм фельдмаршал Португалие ҫитнӗ.

Ответлӑ редактор
заместителӗ **Н. С. СТЕПАНОВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0-67, заместителӗн — 2-89, секретариатӑн—4-26, пропаганда пайӗн—2-89, парти пурнӑҫ пайӗн—3-97, промышленность пайӗн—3-99, ялхуҫалӑх пайӗн—3-89, рабселькорсен пайӗн—0-67, издательство конторин — 0-23.

[illegible] при СНК ЧАССР. Заказ № 2. [illegible] Тираж 16.000 экз.

НТ 04031